


www.tavanen.ru

# Тăван Ен

16+

Шупашкар хутлăхĕн хыпарçи



АНОНС

Раççейĕн пĕрлештернĕ командине кĕнĕ Мария Жаворонкина

№ 25 ● (11276-11277) ● ÇĔРТМЕ УЙĂХĔН 27-МĔШĔ ● 2024 ● КĔÇНЕРНИКУНСЕРЕН ТУХАТЬ

Хакĕ ирĕклĕ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать


● ÇĔНĔЛĔХ

**Раççейре кĕçех çемье нумай ачаллине çирĕплетекен пĕрешкел удостоверени пулĕ.**

Ун пирки РФ премьер-министрĕ Михаил Мишустин пĕлтернĕ.

Çакнашкал удостоверени çулçÿреве час-часах тухакан е пурăнмалли вырăна улăштаракан нумай ачаллă çемьесемшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Унсăр çемье тепĕр регионта çăмăллăхсемпе усă кураймĕ.

ХĂРУШЛĂХСĂР ПАХА ÇУЛ-ЙĔР

РАÇÇЕЙРИ НАЦИ ПРОЕКЧĔСЕМ

**Чăваш Енре регион пĕлтерĕшлĕ автомобиль çулĕсене тытса тăма тата юсама укçа-тенкĕ ытларах уйăрĕç.**

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çакăн пирки калакан йышăнăвне Олег Николаев алă пуснă.

Хушма укçа-тенке тĕп юсав ĕçĕсене пурнăçлама, республика тата муниципалит пĕлтерĕшлĕ çулсене «Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çулсем» наци проекчĕ шайĕнче йĕркене кĕртме уйăраççĕ. Палăртса хунă тăкаксен виçи кăçалах 88,1 млн тенкĕ чухлĕ пысăкланĕ. Çав шутра ку укçа-тенке Шупашкарти Лапсар тăкăрлăкне юсама тата тытса тăма ярĕç.

Патшалăх контракчĕсене çирĕплетнĕ чухнехи перекет 2024 çулта çĕнĕ юсав объекчĕсене ĕçе кĕртме май панă. Çав шутра Çĕмĕрлепе Вăрнар округĕсенчи Шупашкар – Сурское, Калинино – Патăрьел – Елчĕк автоçулсем, тĕп хулана хĕвел анăç енчен илсе çитерекен Шупашкар округĕнчи çул.

Хаклă вулаканăмăрсем!

**«Тăван Ен» хаçата 2024 çулăн утă уйăхĕнчен илсе тăма шутлă кунсем юлчĕç. Çырăнса ĕлкĕрмеваскăр!**

● Редакцире, Ишлей райповĕн лавккисенче – **420 тенкĕ.**

**Килтен тухмасăр www.podpiska.ru сайтра çырăнăр!**

**Тĕплĕнрех çырăнтару пирки 8 (83540) 2-12-59 телефон номерĕпе ыйтса пĕлме пулать.**

**Çырăнтару индексĕ П6022**




Заборы
Навесы
Кровля
Окна
Двери

**Все виды строительных работ.**
**Гарантия качества.**
**Пенсионерам скидка.**
**Т.: 8-987-577-89-63, 8-8352-21-55-82.**

24-247


● УЯВ

# Халăх ăстисене палăртнă



**Çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕнче Республика кунĕн шайĕнче Пĕтĕм Раççейри халăх ăстисен «Раççей ăстисем» конкурсĕ пуçланчĕ. Унта Раççейри 16 региontан килнĕ 40 ытла ăстаçă хутшăннă. Конкурс ĕçĕсене ăстасем 8 сехет жюри умне кăлармa хатĕрленнĕ. Пĕтĕм ĕçе куракансем умĕнче ăсталарĕç. Çав вăхăтрах вĕсем хăйсем тата юратнă ал ĕçĕ çинчен те каласа кăтартрĕç.**

– Ăстасен конкурсĕ питĕ кăмăллă та кăсăклă иртрĕ. Кунта эпир тĕрлĕ ăстаçăсемпе паллашрăмăр, ăсталăх класĕсем патăмăр, пĕр-пĕринчен опыт илтĕмĕр. Çĕртме уйхĕн 24-мĕшĕнче 19 сехетре конкурса вĕçлесе хамăр пĕр кун хушшинче хатĕрленĕ япаласене жюри умне тăратрăмăр, – каласа парать Шупашкар округĕ енчен хутшăннă тĕрĕ ăсти Нина Михеева.

Çакна та палăртмалла, кăçалхи çул конкурса Чăваш Енри Экологие, çутçанталăка перекетлĕн усă курассине тата Раççейри Çемье çулталăкĕсене халалланă. Ăстасен пултарулăхне тĕрлĕ номинацисенче тĕрĕсленĕ. Конкурс ытти çулхисенчен уйрăлса тăчĕ – уйрăм ăстасемпе танах вĕсен çемйисем те хутшăннăччĕ. Конкурсантсем пĕр кунра çĕнĕ япала хатĕрленĕ.

Çĕнтерÿçĕсене дипломсемпе чысланă.

Сăмах май, Республика кунне халалласа темиçе кунах тĕрлĕ çĕрте мероприятисем иртнĕ. Спорт мероприятийĕсем те çав шутра чылай. Хĕрачасем хушшинчи футбол енĕпе Атăлçи первенстви, Пĕтĕм Раççейри халăх пултарулăхĕн «Раççей çăлкуçĕсем» 32-мĕш фестивальхăнасене йышлăн пухрĕç. Савăнăçлă лару-тăрура «Атăл» стадиона уçрĕç, «Спорт çемйи» республика фестивалĕ, пĕтĕм чăвашсен 12-мĕш Акатуйĕ, «Эпĕ – хĕрарăм» конкурса пĕтĕмлетни тата ытти те. Ача-пăча пултарулăхĕн конкурсĕсем те пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнчĕç. Тулли репортаж – 4-мĕш страницăра.

■ **Анжелика КИРИЛЛИНА, Александра РОМАНОВА, Снежана АЛЕКСЕЕВА**





Усă çăлкуçсенчи сăн ÿкерчĕксем